Çĕр ĕçченĕ килти хушма хуçалăхра

# Ĕне усранин тупăшĕ пур

Нумай ачаллă çемьери ачасем туслă та ĕçрен хăрамасăр ĕçчен ÿсни ялта пурăнакан кашни çыншăнах паллă. «Пĕр-пĕринпе тупăшса ĕçлеме вĕренччĕр, пĕр-пĕрне пулăшма тата хутăшма çын пултăр тесе çуратрăм пилĕк ача», – тет Кашмашра пурăнакан хамăн тăван анне З. Белова. Амăшĕн сăмахĕсем пур çĕрте те пĕрех-тăр вĕсем. Çакăн ырă енсене Çатракасси ял тăрăхĕнчи çуралса ÿснĕскерсем. Пурнăç ăнăçăвĕ харпăр хăй вăй хунипе çеç ăннине ачаранах ăнланса ÿсрĕмĕр. Паян вара хамăр çемьере те çак ăнлав пурнăçăмăрăн тĕп шăнăрĕ пулса юлать, – касуран кĕртнĕ ĕнисем çине тата вĕсем тавра сĕт витрипе уткалакан мăшăрĕ çине кăмăллăн пăхса калаçать çемье пуçĕ Родион Алексеевич.

Колхоз электрикĕнче ĕçленĕ ашшĕ Родион шкул ĕмĕтсемпех 1993 çулта вăл тăван ял хĕрĕпе Лилияпа çемье çавăрать.

– Çемье çавăрни пирĕн пурнăçра пысăк улшăну пулчĕ, – калаçăва хутшăнчĕ ĕне сума хатĕрленекен Лилия. – Качча кайнă хĕре, мана ĕнтĕ, атте-анне ĕне пачĕ те мăшăрăм ĕнесем ĕрчетесси пирки сăмахлама пуçларĕ. Хирĕçлемерĕм. Ĕнесем пăруларĕç те вăкăрсем пулчĕç. Вĕсене усрама пуçларăмăр. Çултан-



Очăкасси ялĕнче пурăнакан Лилия Николаевнапа Родион Алексеевич Грачевсем патне çитсен те ала тупанĕ çинчи пекех куртăм.

Очăкасси аслă çултан айккинче вырнаçнă пĕчĕк ял. Анчах унта пурăнакансен ĕçлес хастарлăхне пăхсан ăна малашлăхсăр тесе калаймăн. Ял таврашĕнчи улăх-çаранта иртен пуçласа каçхи тĕттĕмччченех выльăх-чĕрлĕх çÿрет. Çĕр ишĕлекен вырăнсенче ÿсекен йывăç-сем кунта пурăнакансем çĕр эрозийĕпе те çанă тавăрсах кĕрешни пирки калать. Ял варринчи чиркÿ вара Очăкассисене кулленех ĕç хавалĕ пиллет.

– Турă пулăшнипе пурăнатпăр. Çынсенчен юлмасăр ĕçлетпĕр. Яла И. Никитин предпринимателĕн автобусĕсем çÿрени пире те тĕнчерен юлмасăр аталанма пулăшать, – сăмахлама ÿркенмесĕр калаçрĕ чиркÿри каçхи кĕлĕрен тухнă кинемей. Вăлах мана Очăкассисем епле пурăннипе тата Грачевсем ăçта пурăннипе интересленсен тĕрĕс çул кăтартрĕ. Унăн сăмахĕсенчен чăваш йывăрлăхсем çине шанса алă усса ларманни тата малашлăха шанни курăнчĕ.

Чиркÿ патĕнчен ял çырми урлă каçсан инçетре те мар пурăнаççĕ-мĕн эпĕ тĕллесе килнĕ çамрăк мăшăр. Урамран пăхсанах вĕсен хуçалăхĕ ура çинче çирĕп тăни курăнчĕ.

– Эпир мăшăрпа иксĕмĕр те нумай ачаллă çемьере çулне çитиччченех ĕçри инкекре пурнăçне татнă. 30 çул К. Иванов яч. хис. хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕнче ĕçленĕ амăшĕн Зинаида Семеновнан 5 ачине пĕччененех ура çине тăратма тивнĕ. Родион çемьери пĕртен-пĕр ывăл – тăваттăмĕш ача. Арçын ача çине ачаллах арçын тивĕçĕсем тиеннĕ: картине тытмалла, выльăх витисене юсамалла т. ыт. те. Ачисене ура çине тăратма амăшĕ сахал мар выльăх-чĕрлĕх тытнă: ĕне, 4-5 пуç сысна, 10 пуç ытла сурăх, хур-кăвакал, чăх-чĕп. Вĕсене пăхасси ытларах ачасем çине тиеннĕ.

– Аппасем шкул пĕтернĕ çĕре килти хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке пăхасси йăлтах ман çине тиенчĕ. Паллах, Ирина йăмăк пулăшăвĕ те вăл вăхăтра маншăн пысăккăн туйăнатчĕ. Çав вăхăтра никĕсленнĕ ĕç юратăвĕ ĕмĕрлĕхе юлчĕ. Паян та килти хушма хуçалăха выльăх-чĕрлĕхсĕр кураймастăп, – сăпайлăн калаçать Родион Алексеевич.

Шкул пĕтерсен ытти çамрăксем пекех Родион та хулана кайса техник-механик специальноçне алла илет. 4 çул Шупашкарти трактор тăвакан заводра ĕçленĕ хыççăн ял пурнăçĕ ăна тăван енне илсе çитерет. Рядовой колхозник, токарь, уй-хир бригадин бригадирĕ, хуçалăх председателĕ, килти хушма хуçалăха çĕнĕлле аталантараканĕ. Пур çĕрте те Родион Алексеевич çĕнĕлĕхе мала кăларнă. Мал çул выльăхсем хушăнса пычĕç. Мăшăрăн тăванĕсем, унччен сыснасем çине ытларах тимлĕх уйăрнăскерсем, пирĕн пуçарăва ырларĕç. Хамăр шутлани те майракаллă шултра выльăх усрани тупăшлăрах пулнине кăтартрĕ. Çапла вара паян 5 ĕне, ÿссе çитнĕ 4 вăкăр, 3-4 уйăхри 4 вăкăр, хĕл каçнă тынашка тата хамăр пирĕн хушма хуçалăх пуянлăхĕ, – ĕçрен хăрамасăр калаçать Лилия Николаевна.

Çиччĕ виççе пăхнă пулсан чăнах та хăрамалли çук çав. Пурнăçри çĕнĕлĕхсем Грачевсене те пĕр вырăнта лартмаççĕ. Унччен сĕт-турăха сыснасене панă çамрăксем сĕтпе тухăçлăрах усă курмалли çулсем шырасан ăна ваккăн сутни усăлли патне пырса тухнă. Малтанах сĕте яла пыракан коммерсантсене, ялти магазин урлă сутнă. Анчах экономика тишкерĕвĕ кунта та туса илнĕ продуктпа тулăх усă курма май çуккине кăтартнă. Апла пулсан малалла каймалла, анчах ăçта? Сĕт рынокĕнчи ларутăрăва тĕпчени ял çамрăкĕсене икĕ çул каялла Шупашкара çитерет. Телее, Родионăн выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ малтанхи укçа-тенкĕ кивĕ «Волга» автомашина туянма çитет. Вăл пулчĕ те ĕнтĕ малтанхи «молоковоз» вырăнне. 5 пуç сумалли ĕне хăйне евĕр сĕт завочĕ пулса тăчĕç.

Икĕ çул каяллахи ĕнесем паян та сĕт аван антараççĕ. Мăшăрĕпе иккĕшĕ кун урлă Шупашкар пасарĕнче сĕт сутаççĕ, килĕшÿ тунă вырăна та 100 литр леçсе параççĕ. Килти хушма хуçалăх производстви ăнăçлă ĕçлет. Паян Родионпа Лилия хăйсен сĕтне (200 литр ытла) кăна мар, кÿршĕсенне те 50-60 литр çăмăллăнах вырнаçтарса параççĕ.

– Килти ĕнесем талăкне мĕн чухлĕ сĕт параççĕ? – интересленетĕп кил хуçи арăмĕнчен.

– Рациона пăхăнни продуктивлăха çÿллĕ шайра тытма пулăшать. Ĕнесем талăксерен пĕр пăта яхăн сĕт параççĕ, – калаçсах сĕт сума ларчĕ Лилия.

Технологи тенĕрен. Грачевсен хуçалăхран çĕр пайĕсемпе илнĕ çĕр лаптăкĕ 3,2 гектар. Ун çумне 60 сотка çĕр лаптăкĕ иккĕ, 40-шер соткăллă икĕ анкарти. Çĕр пайĕсем çинче люцерна çитĕнет. Анкартисенче вара пахча çимĕç ÿсет: çĕр улми, кишĕр, сухан, купăста, хăяр, помидор т. ыт. те. Кăçал çулталăк пуçламăшĕнче иртнĕ çулхи тухăçран вĕсенчен пĕр пайне сутса кăна Грачевсен килти хушма хуçалăхĕ 20 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

– Хамăр ĕçлекен çĕрсене тислĕкпе пуянлатсах тăратпăр. Çулталăкне тислĕк 12 автомашина та пулать. Ыйтакансем пулсан ăна çынсене те сутатпăр. Килти хушма хуçалăхри кашни ĕçрен тупăш илме тăрăшатпăр. Çапла ĕçлесе тунă тупăшпах хамăр пĕрлешнĕренпе пурăнмалли пÿрте çĕнетрĕмĕр, сарай, лаç, пахча çимĕç упрама путвал турăмăр. Тĕллевсем татах пысăкрах, – йăлтах уçса пама килĕшмерĕ Родион Алексеевич.

– Нумаях пулмасть пирĕн тĕллев ĕне сăвассине механизацилессиччĕ. Иртнĕ çуркунне сĕт сумалли аппарат туянтăмăр. Пĕр ĕнене алăпа сума çур сехет иртетчĕ пулсан, халĕ – 10 минут. Килти хушма хуçалăхра ĕнесем нумаййипе иртнĕ çул 30 кун касу çÿрерĕмĕр. Пире хамăр пуçăннă ĕçре 7 класс пĕтернĕ Жаннăпа 6 класа куçнă Алеша пулăшсах тăраççĕ. Çăкăр епле пиçнине, укçа мĕнле пулнине вĕсем паянах лайăх пĕлеççĕ. Ан ÿркен кăна, ÿркенмесен ялта та ăнăçлах ĕçлесе пурăнма пулать, – терĕ тепĕр ĕне сума куçнă май кил хуçи хĕрарăмĕ.

Çак мăшăра пĕрремĕш кун мар пĕлнĕрен вĕсем обществăлла ĕçре те маттур. Ĕçре хастарскерсем канура та ыттисенчен кая юлмаççĕ. Клубри савăнăçлă каçсенче, районти конкурссенче вĕсем тăтăш тĕл пулакан мăшăр. Иртнĕ çул çеç вĕсем виçĕ Хисеп грамотине тивĕç пулчĕç.

Килти хушма хуçалăх паянхи ĕççĕрлĕх вăхăтĕнчи ăнăçлă ĕç вырăнĕ иккенне Очăкассинчи Грачевсем хăйсен тĕслĕхĕпе çирĕплетеççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Ял хуçалăх производство кооперативĕсенче



# Юратнă ĕçре хастарлăхпа палăраççĕ

***Эсир паянхи сăн ÿкерчĕкре Ильич яч. хис. хуçалăхри Лидия Кимовна Петрована Муркаш лицейĕнче вĕренекен хĕрĕпе Валентинапа куратăр. Вунă çула яхăн ĕнесене машинăпа сăвакан операторта вăй хуракан амăшне юлашки çулсенче хĕрĕ пулăшма пуçлани – районти малтуртăмлă çамрăксен ĕçри пĕр тĕслĕхĕ. Хастарлăхпа палăракан çамрăксем районти ял хуçалăхĕн 2012 çулччченхи аталанăвĕн программине пурнăçлама тивĕçлĕ тÿпе хывасса шанас килет. Ĕçре телей тупнă амăшĕпе хĕрне Уйкас Янасал ĕне ферминче тăтăшах пĕрле курма пулать.***

**А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

Юн кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Хаçат вулавçисен ыйтăвĕсене паян район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ, 3-мĕш класлă юрист В.Ю. Захаров хуравлать***

## Коррупципе кĕрешме

**Коррупци пирки нумай калаçаççĕ. Ку ыйтăва РФ Президенчĕ Д. Медведев та кун йĕркинчен кăлармасть. Ку ыйту пире те интереслентерет. Пĕлес килет, коррупципе кĕрешесси район шайĕнче еплерех пулни пирки хаçатра çырма çук-ши?**

**С. СМЕЛОВ, А. АНТОНОВ.**
Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Район прокуратури вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче «Коррупципе кĕрешесси çинчен» федераллă саккун ыйтнисем епле пурнăçланнине тĕрĕслесех тăрать. Асăннă саккунпа килĕшÿллĕн муниципаллă служащин граждансем е юридициллĕ лицосем взятка сĕннине е панине пĕр тăхтаса тăмасăр хăйне ĕç паракана пĕлтермелле.

Саккунăн 9-мĕш статйин 5-мĕш пайĕ ял тăрăхĕсен тата район администрацийĕсен чиновника взятка панине е сĕннине пĕр тăхтаса тăмасăр хăйне ĕç паракана пĕлтермелли йĕркене туса хума хушать.

Çавна пăхмасăрах нумаях пулмасть ирттернĕ тĕрĕслевсенче асăннă федераллă саккун чылай хушă ĕçленине пăхмасăрах район администрацийĕнче те, ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче те коррупцие ура хумалли йĕркене туса хуман. Çавăнпа та район администрацийĕн пуçлăхĕ тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тĕлĕшпе асăннă çитменлĕхсене пĕтерме ыйтса çыртăмăр.

Коррупципе кĕрешессине район прокуратури малашне те кун йĕркинче малти вырăнта тытса пырĕ. Çитменлĕхсем пирки хаçат вулакансене çийĕнчех пĕлтерсе тăма пăхатпăр. Хаçат вулакансем те кутĕлĕшпе тимлĕхе ÿстерессе шанатпăр.

## 6 уйăха ирĕкрен хăтарчĕç

**Район хаçатĕнче (июлĕн 4-мĕшĕ) Тяпакассинчи хĕрарăм ÿсĕрле милици ĕçченĕ çине алă çĕклени пирки çырнăччĕ. Мĕнле айăплав пулчĕ-ши ăна?**

**И. ОРЛОВ.**
Катькас ял тăрăхĕ.

Вулакан пуçарнă преступлени район территорийĕнче чăнах та пулнăччĕ. Çак кунсенче влаç представительне хирĕç алă çĕкленĕ Д. тĕлĕшпе суд пулса иртрĕ. Следстви тĕрĕслевĕ çакна кăтартса пачĕ. Эрех ĕçсе «паттăрланнă» хĕрарăм çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен милици сотрудникне (çав кун хăйсем патне йывăр çемьери ачасем епле пурăннине пăхма пырсан) алăсемпе-урасемпе тапса-çапса пĕтернĕ. Опекăпа попечительство органĕсем тăратнă кăтартусемпе Д. 7 ача амăшĕ. Вĕсенчен 5-шĕ – çул çитмен çамрăк. Чи кĕçĕнни – инвалид. Çакна пăхмасăрах Д. тăтăшах эрех-сăрапа туслă, ача укçине пĕтĕмпех эрех туянма çеç усă курать. Хĕрарăм ачасене воспитани парассинчен пăрăннăран ачисем выçă пурăнаççĕ е ыйткаласа çÿреççĕ. Д. гражданкăна 2008 çулта ачисемпе тимсĕр пулнăшăн тата вĕсем çине алă çĕкленĕшĕн Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 156, 116 статйисемпе уголовнăй майпа айăпланăччĕ. Анчах вăл унтан тĕрĕс пĕтĕмлетÿ туманнине шута илсе çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен пай инспекторĕ опекăпа попечительство органĕпе пĕрле ăна амăш правинчен хăтарма документсем хатĕрлеме пуçланă пулнă...

Судра патшалăх айăплавçи Д. гражданкăна 2 çуллăха ирĕкрен хăтарса колони-поселение яма ыйтрĕ пулин те, район сучĕ айăплава «çемçетрĕ».Пулса иртни тăрăх район сучĕ Д. гражданкăна РФ УК 318-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе 6 уйăхлăха ирĕкрен хăтарса колони-поселенире тытма приговор кăларчĕ.

Вулакан ыйту лартать

# Тирпейлĕхшĕн кашни яваплă

Япалан (вещество) йывăрăшĕ упранни пирки калакан саккун тахçанах паллă. Çака эпир кăларса тăкакан çÿп-çап тĕлĕшпе те тĕрĕс килсе тухать. Тепĕр майлă каласан, мĕн чуль усă куратпăр – çÿп-çапĕ те çавăн чухлех пулмалла. Эпир вара... Слонсем пек çиетпĕр те шăшисем пек пуçтаратпăр. Тепĕр майлă каласан, пирĕн тавралăхра çÿп-çаппа каяшсен купи ÿссех пырать. Çав шутра Муркашра та.

Кашни çынах кил таврашĕнче пухăннă çÿп-çапа никам куриччен çывăхри вар хушшине е кÿршĕсен хыçĕнчи çырмана «пушатма» тăрăшать. Анчах «цивилизаци тыткăнĕнчи» этем темшĕн çав çÿп-çапа хăй пахчи хыçне тăкмасть... Çак культурăна курса ÿсекен çамрăксем малалла каясси питех те иккĕленÿллĕ.

Юрать-ха органикăллă каяшсемпе çут çанталăк хăйне майлă кĕрешет, анчах пахча хыçне тухакан тимĕр-тăмăрпа, йăлари чашăк-тирĕкпе, полиэтилен хутсемпе тата кĕленчесемпе, ваннă кантăкпа мĕнле пулмалла? Эпир ача чухне çарран чупнă çарансене халĕ сандалисĕр тухма çуках. Мĕн патне пыратпăр? Çак ыйту уйрăм хуçасене çеç мар, кашни çынна шухăшлаттармалла. Кая юлсан каю шăтать.

Пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ йăлари хытă каяшсене пуçтарса тирпейлемелли полигон тăвасси пирки сăмах пырать. Анчах вăл хальлĕхе çук-ха. Çавăн пекех урамсенче çÿп-çап контейнерĕсем те вырăн тупаймарĕç. Çав вăхăтрах çÿлти пуçлăхсем пурнăç илемленни пирки ÿркенмесĕрех калаçаççĕ. Ĕçмелли шыв пахалăхĕ пирки калаçнă чух та ĕлĕкрех çăлсенчен шыв ĕçсех пурăнса тесе лăпланаççĕ. Тĕрĕсех, ку лайăх, анчах пурнăç малалла аталанать, çĕнĕлĕхсем ыйтать. Ĕнерхилле пурăнакансем вара унччен-хиллех çывăхри тăкăрлăкра пухăнса эрех ĕçеççĕ. Эрех кĕленчисене, закуска чĕркенĕ хутсемпе консерва банкисене хăйсем пулнă çĕртех купаласа хăвараççĕ. Хăçанччен пырĕ ку йĕркесĕрлĕх? Хуравĕ малтанах хамăрта, тăванăмсем. Паллах, вырăнти хăй тытăмлăхăн та çĕнĕлле ĕçлеме вĕренмелле. Хамăр тавралăх çине хуçаллă куçпа пăхсан çеç пирĕн таврари çут çанталăк илемлĕхĕпе пире те, хыççăнхи ăрусене те савăнтарĕ.

**В. МАСТЕРОВ, ĕç ветеранĕ.**